К 83.39 (=Чув) 6-8
К38
К-71267

АНАТОЛИЙ КИБЕЧ



Этапы творческого пути

город Чебоксары, 2012 год

Национальная библиотека ЧР
k-071267

Анатолий Ильич Кибеч (Ефимов) 1937 çулхи çурла уйăхĕн 10-мĕшĕнче Чăваш республикинче, Канаш районĕнчи Кибеч тăрăхне кĕрекен Чулкăмакара çуралнă. Вăл яланах лайăх вĕренсе тарăн пĕлӳ илме тăрăшнă, каярах диссертации хӳтĕлесе наука кандидачĕ пулса тăрать, чылай çул хушши аслă шкулсенче ĕçлет, философипе, эстетикăпа, педагогикăпа наука ĕçĕсем çырать, лекцисем вулать. Вăл общество ĕçне те хастар хутшăнать, паян кун та наци юхăмĕнче ырми-канми тăрăшать.

Музыка енĕпе ятарлă пĕлӳ илнĕскер Кибеч 1970-1980 çулсенче ЧР Хор обществин Шупашкар хула уйрăмне ертсе пырать, хула кунне чыслас йăлана пуçарса ярать. «Ĕмĕр сакки сарлака» юрă (кĕвви Ю. Григорьвăн) эфира тухнă хыççăн ун ячĕ хăвăрт сарăлать, литературăра та пысăк çитĕнӳсем тăвать. Халăха юрă хыççăн юрă парнелет, чăваш юррин пахалăхне упрассишĕн тăрăшать. Унăн кашни юрри çĕнĕлле, ырă шухăш-туйăмпа пуян. Вăл çырнă прозăлла сăвăсемпе калавсене, повеçсемпе пьесăсене, «Улăп таврăнни» роман-халапа вулакансем ырă кăмăлпа йышăнчĕç.

А. Кибеч пултарулăхĕ çĕнĕлĕх енчен те урăх шайра тăрать. Унта хальхи пурнăç таппи, малашлăх туртăмĕ вăйлă, психологипе философии никĕсĕ тарăн та çирĕп. Тен, çавна пулах хальхи критиксем ун пултарулăхне тĕпчес ĕçе çĕнсе илеймен-ха. Çемçе хупăллă мăйăр мар иккен вăл, çавăнпа паха та ĕнтĕ Кибеч ĕçĕсем, вăл çырнă хайлавсем. Кăна çак альбома кĕртнĕ ӳкерчĕксемпе сăвă-юрăсем те аван кăтартса парасса шанас килет.

Анатолий Ильич Кибеч (Ефимов) родился 10 августа 1937 г. в дер. Челкумаги Канашского района Чувашской Республики. В школе учился хорошо, его всегда отличала тяга к познанию. Позже, защитив диссертацию, становится кандидатом наук, трудится в вузах, читает лекции, пишет научные работы по философии, эстетике и педагогике, активно участвует в общественной жизни республики, в поддержании и развитии чувашского национального движения.

Как признанный специалист по музыке, он в 1970-1980 г.г. возглавил Чебоксарское городское отделение Хорового общества ЧР, был инициатором празднования Дня города. Его имя получает широкую известность после выхода в эфир песни «Ĕмĕр сакки сарлака» (муз. Ю. Григорьева), появляются все новые и новые песни, отличающиеся глубиной мысли и чувств. Его по праву можно назвать защитником и продолжателем лучших традиций чувашской песни. Этими же качествами обладают его стихи в прозе, рассказы, повести и пьесы, роман-легенда «Воз-



К83.39(=Чув)6-8
К38
Кур

ШУРĂ ШУПАШКАР (Мухтав юрри)
СВЕТЛЫЙ ГОРОД ЧЕБОКСАРЫ
(Величальная)

Кӗвви **Г. Максимовăн** / Музыка **Г. Максимова**



Шупашкар тесе ят панă,
Несĕлсем сана савса.
Сан чысна ялан упранă
Чĕререн тупа туса.

Шурă, шурă Шупашкарăм
Çирĕп шанчăк çуратан.
Эх, илемлĕ эс, хуламăр,
Хамăр сапăр пулнăран.

Акăш евĕр çунат сартăн,
Ыталарăн Атăла,
Юрату хумне вăйлатрăн
Капăр тумлă тĕп хула.

Шурă, шурă Шупашкарăм
Çирĕп шанчăк çуратан.
Эх, мухтавлă эс, хуламăр,
Хамăр паттăр пулнăран.

Чĕресем хĕрӳ те харсăр,
Ĕмĕтсем те малалла.
Ут, хуламăр, ывăнмасăр –
Улăп йăхĕ санпала.

Шурă, шурă Шупашкарăм
Çирĕп шанчăк çуратан.
Эх, мăнаçлă эс, хуламăр,
Хамăр сумлă пулнăран.
Шупашкар! Шупашкар!

Шубашкаром называли
Предки ласково тебя.
Твою славу умножали,
Клятву верности храня.

Как светлы вы, Чебоксары,
Город дивный и родной.
Ты ласкаешь наши взоры
Чудотворной красотой.

Словно лебедь белокрылый
Волгу нежно ты обнял.
Вечно юный, город стольный,
Ты еще прекрасней стал.

Как добры вы, Чебоксары,
Город милый и родной,
Ты ласкаешь наши взоры
Чудотворной красотой.

С гордым именем Улыпа
Нам с тобой идти вперед.
Смелым мыслям даль открыта –
Сердцу хочется в полет.

Величавы Чебоксары,
Город славный и родной,
Ты ласкаешь наши взоры
Чудотворной красотой.
Шубашкар! Шубашкар!

Национальная библиотека Чувашской Республики
К-71 267

ЁМЁР САККИ САРЛАКА

Кёвви Ю. Григорьевăн



Ёмĕр сакки сарлака, тетпĕр эпĕр хăш чухне,
Сакки чăн та сарлака, анчах ёмĕрĕ кĕске.
Сакки чăн та сарлака, анчах ёмĕрĕ кĕске.
Мĕнле пурăнмаллине, пурнăç тути-масине
Хĕрĕх урлă каçсан тин ав пуçлатпăр чухлама.
А-а-а.....
Сакки чăн та сарлака, анчах ёмĕрĕ кĕске.

Малалла пăхса илетпĕр, çулсем нумай та юлман.
Çавăн чухне вара тин çамрăклăха тепĕр хут
Кăшт тишкерсе тухатпăр. Çамрăклăха тепĕр хут,
Мĕнле пурăнмаллине, пурнăç тути-масине
Çавăн чухне вара тин кăшт тишкерсе тухатпăр.
А-а-а.....
Сакки чăн та сарлака, анчах ёмĕрĕ кĕске.

Çеçпĕлĕмĕр çулĕнче хамăр ача шутĕнче
Сиккелесе çӳренишĕн ӳпкелешсе илетпĕр.
Çеçпĕлĕмĕр çулĕнче хамăр ача шутĕнче.
Куçа уçмаллаччĕ ман, пурнăç тути-масине,
Пурнăç тути-масине, мĕнле пурăнмаллине...
Ёмĕр сакки сарлака, тетпĕр эпĕр хăш чухне,
Сакки чăн та сарлака, анчах ёмĕрĕ кĕске.
А-а-а.....
Сакки чăн та сарлака, анчах ёмĕрĕ кĕске.
Ёмĕр сакки сарлака, тетпĕр эпĕр хăш чухне,
Сакки чăн та сарлака, анчах ёмĕрĕ кĕске.

ҪАМРĂКЛĂХ СĂНАРĔ

Сăвви те, кĕвви те **А. Кибечĕн**



Çут тĕнчене килтĕм,
Сар хĕвелпе ӳсрĕм.
Çавă сар хĕвелĕм
Пулчĕ ман аннем.

Çут тĕнчене килтĕм,
Юратупа ӳсрĕм.
Ырлăх кӳрекенĕ
Пулчĕ ман аттем.

Çут тĕнчене килтĕм,
Кил ăшшипе ӳсрĕм.
Пурнăç пиллекенĕ-
Аттепе аннем.

Хушса юрламалли:
Çамрăклăх чĕкеç пек
Хăвăрт вĕçсе кайрĕ,
Шевле пек вылярĕ
Манăн умăмра.
Çамрăклăх чĕкеç пек
Хăвăрт вĕçсе кайрĕ,
Пурпĕр ун сăнарĕ
Юлчĕ асăмра.

Хушса юрламалли.

Хушса юрламалли.



**Отец –
Илья Ефимович
Ефимов
(1911-1942)**

**Мать –
Васса Павловна
Ефимова
(1912-1990)**

ХАМĂР КИЛ ĂШШИ

Кĕвви О. Соколовăн



Эпĕ ăçта кăна çитмерĕм,
Пултăм тĕрлĕ çĕршывра.
Хамăр кил асран тухмарĕ,
Çук, каймарĕ куçăмран.
Ăшра лăпкăлăх пулмарĕ,
Шухăш хӳхрĕ пуçăмра.

Эп ăçта кăна çитмерĕм,
Çук, пулмарĕ ыр кун-çул.
Умри асамат кĕперĕ
Пулчĕ савăнçăлă çул.
В ă л мана киле çитерчĕ, –
Курманни унта тем чул.

Эпĕ ăçта кăна çитмерĕм,
Телей хыççăн çӳресе.
Хам çуралнă савнă енĕм
Илчĕ кăмăллăн кĕтсе.
Атте килĕ хĕпĕртерĕ, –
Шаннă пуль çав килессе.

Хушса юрламалли:
Тулли уйăх çутă çутатсан та
Хĕвеле нихçан та çитес çук.
Сар хĕвел тем пек хĕмне сапсан та,
Килă шшине пурпĕр çитес çук.
Килă шшине пурпĕр çитес çук та,
Хăй патне пире пуçтарас çук.

Хушса юрламалли.

Хушса юрламалли.

КĔТСЕ ИЛ МАНА


Сава̄на̄çла̄н
Кай-ма йы-ва̄р пул-чĕ, кил-ме çа̄-ма̄л-рах, у-ни-че хап-
хи те та̄-рать у-çа̄л-сах. Кĕт-се ил ан-не-çĕм, кĕт-се
ил ма-на çĕн-те-рӳ-пе çит-рĕм ал-у-рам та сы-вах. 2. Ман-ша̄н

Кайма йывăр пулчĕ, килме çăмăлрах,
Униче хапхи те тăрать уçăлсах. *2 хут.*
Кĕтсе ил, аннеçĕм, кĕтсе ил мана,
Çĕнтерӳпе çитрĕм, ал-урам та сывах. *2 хут.*

Маншăн хӳтлĕх пулчĕ эсĕ пил пани,
Çемьемĕр чысне те упра эс тени. *2 хут.*
Кĕтсе ил, аттеçĕм, кĕтсе ил мана,
Çĕнтерӳпе çитрĕм, эпĕ чи телейли. *2 хут.*

Чăн та хӳтлĕх пулчĕ пирĕн юрату,
Чĕреме ăшăтрĕ эс панă тутру. *2 хут.*
Кĕтсе ил, савниçĕм, кĕтсе ил мана,
Çĕнтерӳпе çитрĕм, кĕçĕрех тĕлпулу. *2 хут.*

Министерство просвещения Чувашской АССР, Чувашский обком профсоюза работников просвещения, высшей школы и научных учреждений

награждают

ПОЧЕТНОЙ ГРАМОТОЙ

тов. Кибеча Анатолия Ильича,

заведующего кабинетом Чувашского института усовершенствования учителей, за активное участие в организации и проведении республиканского фестиваля художественной самодеятельности школьников.

Министр просвещения Чувашской АССР

Председатель обкома профсоюза работников просвещения, высшей школы и научных учреждений

г. Чебоксары, 1976 г.

№ 00381

Народный Академик Чувашии
1995 г.

УДОСТОВЕРЕНИЕ № 3

Кибеч Анатолий Ильич

является действительным членом Чувашской народной Академии

Президент ЧНА П.Т.Тихонов


Отчий дом

ПУРНĂÇ ÇУЛĔ ТАКĂР МАР

Кĕвви Ю. Жуковăн



Кашни çынах çĕр çинче
Телей курма çуралать.
Анчах пурнăç аллинче
Шăпи урăхла вылять.
Хам телейĕме курсан,
Выртса макăрас килет.
Сирĕн çине, ай, пăхсан,
Каллех шанчăк илĕртет.

Хушса юрламалли:

Атте-анне пиллесе панă телейпе
Пĕлеймерĕм, тен, утма пурнăç
çулĕпе.

Пĕччен пурнăç çăмăл мар,
Тунсăх каймасть ман çумран.
Сивĕтмешкĕн кирлĕ мар
Çывăх çынна хамăртан.
Атте ăс-тăн панă чух,
Итлемерĕм сăмахне,
Аннепе калаçнă чух,
Мĕн-ма хуçрăм кăмăлне?

Хушса юрламалли.

Пурнăç çулĕ такăр мар –
Нумай тӳсрĕм нушине.
Пирĕн ĕмĕр иккĕ мар -
Упраймастпăр пĕр-пĕрне.
Çула тухăттăм тепре,
Утăттăм халь урăхла.
Сукмакăма тӳрлетме
Манăн вăй-хал тупмаллах.

Хушса юрламалли.

Студент Васильевского лесотехнического техникума А. Ефимов (Кибеч) среди однокурсников (второй ряд, третий справа)

УЛĂП ЕВĔР ÇĔКЛЕНЕР
(Чăваш наци конгресне халлаcа)

Кĕвви Г. Максимовăн



Авалтан савать тăван çĕршывăм
Пархатарлă Атăл аттене.
Сахал мар вăл курнă вутпа çулăм,
Çичĕ ют килсе алхаснине, –
Чăвашсем ятне яманнине.
Улăп евĕр хăвăрт вăй илсе
Малалла утар-и пĕрлешсе.
Çĕрпе Хĕвел, пире вăй пар,
Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар.

Тăхăр тăвăл витĕр тухнă халăх
Ирĕке юратнă яланах.
Чăваш мулĕ – туслăхпа тăванлăх,
Ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах –
Пурнăç пилĕ пирĕн çапларах.
Улăп евĕр хăвăрт вăй илсе
Чыслăха упрар-и пĕрлешсе.
Çĕрпе Хĕвел, пире вăй пар,
Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар.

Чан çапса вăратрĕ çĕнĕ юхăм,
Шанчăк пур-ха, паттăрлăх пĕтмен.
Çирĕп пултăр утăм хыççăн утăм,
Тĕреклен, мухтавлă Чăваш ен,
Ыр ĕçпе тĕнче шайне çĕклен.
Улăп евĕр хăвăрт вăй илсе
Телее туптар-и пĕрлешсе.
Çĕрпе Хĕвел, пире вăй пар,
Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар.

ТĂВАН ЯЛĂМ

Кĕвви П. Федоровăн



КĂВАК КĂВАКАРЧĂН

Кĕвви А. Никитинăн



Кăвак кăвакарчăн та эп пулам-и,
Крыльца умне ларса та юрлам-и,
Крыльца умне ларса та юрлам-и.

Хушса юрламалли:
Ай-хай, пырса кур,
Ай-хай, çитсе кур.
Çамрăк ĕмĕр иртсе пырать,
Выляса-кулса юл.

Сирĕн савнă тăван та эп пулам-и,
Кĕреке умне тăрса та юрлам-и,
Кĕреке умне тăрса та юрлам-и.

Хушса юрламалли.

Кăмăлăма уçса та, ай, парам-и,
Калас тенĕ сăмаха калам-и,
Калас тенĕ сăмаха калам-и.

Хушса юрламалли.

Инçе çула кĕске те, ай, тусамăр,
Пирĕн пата çитсе те курсамăр,
Пирĕн пата çитсе те курсамăр.

Хушса юрламалли.

Куç умне тухса тăраççĕ
Пуçне уснă йăмрасем.
Яланах чуна туртаççĕ
Вăй выляна вырăнсем.

Хушса юрламалли:
Тăван ялăм,
Савнă тăван ялăм,
Эсĕ мана каçарсам,
Эсĕ мана каçарсам.

Мĕншĕн-ши ытла
васкатпăр
Санпала сывпуллашма.
Мĕншĕн-ши часах
манатпăр
Сана тивĕç хак пама?

Хушса юрламалли.

Хăш чухне хыт мухтанатпăр
Ялтан тухса кайнипе.
Каярах тин асăрхатпăр
Савнă ял пит хаклине.

Хушса юрламалли.

Эх, çуралнă савнă ялăм,
Мана эсĕ вăй парсам:
Сан умра ман пысăк парăм,–
Каçарсамччĕ, каçарсам.

Хушса юрламалли.


ПОЧЕТНАЯ ГРАМОТА

ТЕЛЕЙ, ТЕЛЕЙ

Кĕвви **А. Никитинăн**



Телей, телей, тееççĕ,
Телей, телей, тееççĕ.
Телей мĕнле пулать-ши,
Кам каласа парать-ши.

Хушса юрламалли:

Ытарайми ыр çынсем,
Куçăм тулли тăвансем,
Эсир телейлĕ пулсан
Эп те пулăп телейлĕ.
Телей, Телей! Мĕн вăл?
Телей тени мĕн вăл?

Ыйтрăм эпĕ аннерен,
Куççуль витĕр каларĕ –
Телей пайланă чухне
Кая юлтăм çав, терĕ.

Хушса юрламалли.

Ыйтрăм эпĕ аттерен,
Пăшăрханса каларĕ –
Телей пайланă чухне
Килте пулман çав, терĕ.

Хушса юрламалли.

Тен, ахăртнех,телее
Хамăр тупма пĕлмелле.
Пĕрне-пĕри пулăшса,
Йывăр чухне ал парса.

Хушса юрламалли.





ТĂВАН ХУЛАМĂР

Кĕвви Г. Максимовăн



Капмар курнать тăван хуламăр
Хăватлă Ăтăл хĕрринче.
Ăна эпир çĕкленĕ хамăр
Тивлетлĕ пурнăç ниминче.
Сенкерленсе килсессĕн шуçăм
Сăну вылять хумсем çинче.
Илсен те илĕнмест ик куçăм
Ирхи илем ытамĕнчен.
Илсен те илĕнмест ик куçăм
Çĕн Шупашкарăм, сан çинчен.

Сума суса туссем çитсессĕн
Чăваш ал пачĕ вĕсене.
Сар кун çĕршывĕнчи кĕслеçĕн
Юрлар тăванлăх юррине.
Сенкерленсе килсессĕн шуçăм
Сăну вылять хумсем çинче.
Илсен те илĕнмест ик куçăм
Хаваслă кун ытамĕнчен.
Илсен те илĕнмест ик куçăм
Çĕн Шупашкарăм, сан çинчен.

Юратăвне кунта тĕл пулнă
Вĕри чĕреллĕ çамрăксем.
Çĕн хулара çĕн пурнăç тунă
Мухтавлă халăх ачисем.
Сенкерленсе килсессĕн шуçăм
Сăну вылять хумсем çинче.
Илсен те илĕнмест ик куçăм
Тăван хула илемĕнчен.
Илсен те илĕнмест ик куçăм
Çĕн Шупашкарăм, сан çинчен.

Владивосток.
Остров Русский.
1958 год



ЮРАТУ ВАЛЬСĔ

Кĕвви **А. Асламасăн**



Юрă пуçлар-и,
Ташша тухар-и,
Çывăх туссем, тантăшсем.
Çамрăклăх харсăр,
Çамрăклăх паттăр,
Çутă ун халь ĕмĕтсем.

Пирĕн тавра халь
Пурте çавăрнаççĕ,
Иккĕн – тĕнче варринче.
Çамрăксен вальсĕ,
Юрату вальсĕ,
Пирĕн чуна çĕкле.

Куçран пăхсамччĕ,
Кăшт калаçсамччĕ –
Сан туйăмна эп сисеп.
Вăхăт час иртĕ –
Ташă вĕçленĕ,
Сан сăмахна эп кĕтеп.

Пирĕн тавра халь
Пурте çаврăнаççĕ,
Иккĕн – тĕнче варринче.
Çамрăксен вальсĕ,
Юрату вальсĕ,
Пирĕн чуна çĕкле.

Рядом с любимым преподавателем Канашского педагогического училища – композитором А. Михайловым. 1960 год

Первый выпуск музыкального отделения Канашского педагогического училища. 1961 год

ВĔÇСЕ КИЛЧĔ ШĂНКĂРЧ ÇУРКУННЕ

Кĕвви Г. Немцовăн



Вĕçсе килчĕ шăнкăрч çуркунне,
Савăнса пуçларĕ юррине.
Инçетре вăл курнă аттене,
Тăшмана вутпа çунтарнине,
Çĕршыва чунтан юратнине,
Ун чысне ӳкме паманнине.

Вĕçсе килчĕ шăнкăрч çуркунне,
Хурланса пуçларĕ юррине,
Курнă вăл каллех ман аттене,
Çырмара суранлă выртнине,
Юнлă аллипе кармашнине,
«Малалла!» – теçе кăшкăрнине.

Вĕçсе килчĕ шăнкăрч çуркунне,
Хурланса пуçларĕ юррине,
Курайман текех вăл аттене,
Тупнă шыраса ун хĕресне,
Ваттисем пилленĕ çĕр çине
Илсе килнĕ унăн тăприне.

Вĕçсе килчĕ шăнкăрч çуркунне,
Савăнса пуçларĕ юррине,
Вăл пĕлтерчĕ вăрçă пĕтнине.
Куртăм эпĕ халăх кăмăлне,
Куççульне çăтса юрланине,
Сурансем çаплах ыратнине...

Учитель музыки А. Кибеч среди преподавателей и учащихся Ибресинской школы-интерната

МАН ЮРАТУ

Кёвви И. Андреевăн



Тусăмçăм, савни, эс ил чĕре çумне,
Маншăн юрату асамлăх тенине.
Юрату пирки пит шухă шутлакан
Çакă туйăма
Пĕлмест те хаклама.

Хушса юрламалли:
Ман юрату çути,
Ман юрату çути
Çутаттăр сан çулна.
Ман юрату ăшши,
Ман юрату ăшши
Пултăр саншăн кăна.

Тусăмçăм, савни, эс ил чĕре çумне,
Маншăн юрату асамлăх тенине.
Юрату çине пит çăмăл пăхакан
Çакă туйăма
Пĕлмест те упрама.

Хушса юрламалли.

Тусăмçăм, савни, эс ил чĕре çумне,
Маншăн юрату сăпайлăх тенине.
Юрату пирки вылявлă пуплекен
Çакă туйăма
Пĕлмест те хаклама.

Хушса юрламалли.

Тусăмçăм, савни, эс ил чĕре çумне,
Маншăн юрату тасалăх тенине.
Савнă çынпала чарусăр тытакан
Чăн-чăн туйăмпа
Пĕлмест те юратма.

Хушса юрламалли.

Преподаватель А. Кибеч среди студентов Канашского педагогического училища. 1964 год

ТУНСĂХ ЮРĂ

Кĕвви А. Никитинăн



Çамрăк чух пурнаттăм ĕмĕтпе,
Тĕл пулма шутлаттăм телейпе.
Çук, пĕлмен çав пурнăç мĕнлине,
Ун тути пĕр пек пулманнине.

Хушса юрламалли:
Темшĕн сивĕ, темшĕн пушă
Халĕ ăшăмра,
Тăлăх чунăм, тăлăх чунăм,
Вырăн эс шыра.

Камшăн пулчĕ пурнăç пыл тути,
Маншăн пулчĕ йӳçĕ армути.
Çук, пулмарĕ маншăн юрату –
Мĕн тери çак пысăк çухату.

Хушса юрламалли.

Кайăк çук халь шаннă йăвара,
Çăлтăр çулĕ халь выртмасть умра.
Çук, çумарĕ ырлăх пуç çине,
Хурлăх пӳлчĕ ман телей çулне.

Хушса юрламалли.

Çамрăк чух пурнаттăм ĕмĕтпе,
Тĕл пулма шутлаттăм телейпе.
Пурăнса ирттертĕм ĕмĕтпе,
Темшĕн тĕл пулмарăм телейпе.

Хушса юрламалли.

Студент музыкального факультета Чувашского государственного педагогического института им. И.Я. Яковлева А. Кибеч – руководитель хора сотрудников института «Чувашгражданпроект». 1967 год

Национальная библиотека Чувашской Республики К-71267

КУРИЧЧЕН КУРАС КИЛЕТ

Кёвви А. Никитинăн



Санăн сăну ярса тытрĕ туйăма,
Лекрĕ пулас манăн чĕрем тыткăна.
Ăсăм хушать çак туйăмран пăрăнма,
Куçăм васкать каллех сана шырама.

Хушса юрламалли:
Кай, кай, кай, ман умран эс кай,
Ан çунтар тек ман чуна.
Кай, кай, кай, пит инçе ан кай,
Курас килет ман сана.

Курсан темшĕн хам туйăмран вăтанап,
Эсĕ ытла çамрăккишĕн кулянап.
Мĕнле çулпа çывхарам-ши сан патна,
Мĕн каласа çавăрам-ши кăмăлна.

Хушса юрламалли.

Мĕншĕн-ши эс кая юлтăн çуралма,
Мĕншĕн эп те пит васкарăм кун курма.
Мĕншĕн çук-ши хам çулсене чакарма,
Санпа пĕрле пĕр ӳсĕмри çын пулма.

Хушса юрламалли.

Çапла пулать тепĕр чухне пурнăçра,
Кĕтмен çĕртен сиксе тухать куляну.
Ăшăм-чунăм асапланать тыткăнра,
Хыпса илсен кая юлнă юрату.

Хушса юрламалли.

ЧЕЧНЯРИ ЧĂВАШ КАЧЧИ

Кĕвви Ю. Кудаковăн



Ырлăхпа ӳссе вăй илнĕ,
Сăн-питрен те пит япшар.
Çамрăк чух кашни илемлĕ,
Юрату та юнашар.
Чечняри чăваш каччи,
Мĕн çухатнă эс унта?
Мĕн шырарăн,
Мĕскер турăн
Тăхлан çунă вырăнта?

Кам чысне эс хӳтĕлерĕн,
Çамрăклах вăрçа кĕрсе.
Камшăн çапçăса çӳрерĕн,
Чечняна сиен кӳрсе.
Чечняри чăваш каччи,
Мĕн çухатнă эс унта?
Мĕн шырарăн,
Мĕскер турăн
Çулăм хыпнă вырăнта?

Сумсăр вăрçă юнлă пулчĕ,
Ылханни те çитрĕ пуль.
Тупăк хыççăн тупăк килчĕ, –
Пит тăварлă-çке куççуль.
Чечняри чăваш каччи,
Мĕн çухатнă эс унта?
Мĕн шырарăн,
Мĕскер турăн
Пурнăç çуннă вырăнта?

Всероссийское Хоровое Общество

ПОЧЕТНАЯ ГРАМОТА

Жена Галина

ЧĔРЕМ, ЧĔРЕМ

Кĕвви **А. Никитинăн**



Сывă чух чĕремĕре тăрăшмастпăр упрама,
Сывлăх чи хакли ҫинчен пĕлейместпĕр шутлама.
Куҫа уҫнă-уҫманах тытăнатпăр васкама:
Малалла та малалла – вăхăт ҫук пек тăхтама.
Чĕрем, чĕрем, тархаслап сана,
Эсĕ, эсĕ ан пăрах мана.

Кĕвĕҫ чунсен ҫăхавне, сив сăмахпа хăртнине
Йăлт илет вăл хăй ҫине, сыхласа чун хавалне.
Ырлăхра та хурлăхра шеллемест хăй ăшшине,
Канăҫа манса тапать – пĕлме ҫук ун мехелне.
Чĕрем, чĕрем, тархаслап сана,
Эсĕ, эсĕ ан пăрах мана.

Лавне йывăр тиесен, ҫулĕ тумхахли лексен
Такăнма пуҫлать чĕре, итлеми пулать пире,
Ытларах та ытларах хуҫине пăхăнтарать,
Хуҫине пăхăнтарать – хăй тарҫи туса хурать.
Чĕрем, чĕрем, тархаслап сана,
Эсĕ, эсĕ ан пăрах мана.

Великая радость

ПИРЁН ПУРНĂÇ ПЫЛ ТА ÇУ

Кĕвви А. Никитинăн



Пуçа чиксе, васкаса,
Çынсем хăвăрт утаççĕ,
Ăна-кăна шыраса
Черетсенче тăраççĕ.
Сывлăх ытла хавшасан
Тухтăр патне каяççĕ,
Кирлĕ эмел çуккăран,
Курăк шывĕ ĕçеççĕ.
Эх, ма! Матькасси!
Маншăн пулсан — хуткупăс!
Мĕн кирлине тупасси,
Мана пурпĕр ним те мар.
Эх, ма! Матькасси!
Маншăн пулсан-хуткупăс!
Лайăх эмел тупасси,
Мана пурпĕр ним те мар.

Сирĕн килти ачасем,—
Йăран çинчи катемпи.
Пирĕн килти ачасем —
Ют çĕр-шыври Илемпи.
Кĕштах çумăр çусан та
Мачча çине шыв анать,
Таçта çити çырсан та
Тумла юхма чарăнмастъ.
Эх, ма! Матькасси!
Маншăн пулсан — хуткупăс!
Капăр тумтир тупасси,
Мана пурпĕр ним те мар.
Эх, ма! Матькасси!
Маншăн пулсан — хуткупăс!
Чаллă хваттер илесси,
Мана пурпĕр ним те мар.

Кирлĕ çынпа туслашса
Пĕлмелле халь пурăнма,
Сирĕн çинчен шутласа
Пит кирлех-и пуç ватма?
Пурнăçăмăр вăрăм мар,
Мĕншĕн ĕçлес вăй хурса,
Çынсен нуши ним те мар,
Хамăр юлар савăнса.
Эх, ма! Матькасси!
Маншăн пулсан — хуткупăс!
Пуян пурнăç тăвасси,
Мана пурпĕр ним те мар.
Эх, ма! Матькасси!
Маншăн пулсан — хуткупăс!
Смрĕн пурнăç — харкашу,
Пирĕн пурнăç — пыл та çу!



МАН ҪĂЛТĂРĂМ

Кĕвви **А. Никитинăн**



Манăн çăлтăр тӳпере,
Çути унăн чĕрере,
Çиçет кунĕн-çĕрĕпе
Сирсе тĕксĕм тĕтрене.
Çăлтăрăм, эс ан сӳнсем!
Çут тĕнчери илемпе
Тăраниччен киленме
Мана эсĕ пулăшсам.

Пĕччен маршăн савăнап –
Эсĕ çиçнĕ вăхăтра
Хама вăйлăрах туяп,
Санпа пĕрлех эп çунап.
Çăлтăрăм, эс ан сӳнсем!
Умри çула çутатса
Телей патне çывхарма
Мана эсĕ пулăшсам.

Турри çырнă çăлтăра
Кашни васкар тĕл пулма.
Пĕрле ялкăшса çунар,
Тăвансене ăшăтар.
Çăлтăрăм, эс ан сӳнсем!
Хам чысăма упраса
Атте ятне çĕклеме
Мана эсĕ пулăшсам.

А. Кибеч среди слушателей курсов по эстетике

АЧА ÇУРТЁНЧЕ



Ача çуртĕнче,
Тĕттĕм кĕтесре,
Çурта умĕнче
Ик пĕчĕк мĕлке –
Йĕкĕреш чунсем,
Пĕртăван çынсем.
Амăш сăн-питне
Шыраканскерсем.

Мĕнлерех-ши эс,
Кам пекрех-ши эс –
Пĕлекен те çук,
Калакан та çук.
Амăш кĕлетки
Куç умне тухмасть,
Куççуль ӳкнипе
Çурта çунаймасть.

Эх, анне, анне,
Ăçталла çулу,
Мĕншĕн кунталла
Сан утмасть уру.
Эс вĕçсе килсем
Çывăрма выртсан,
Ырă тĕлĕкре
Хăвна кăтартсам.

Ача çуртĕнче,
Тĕттĕм кĕтесре,
Çурта умĕнче
Пĕртăван чунсем...
Амăш кĕлетки
Куç умне тухмасть,
Куçуль ӳкнипе
Çурта çунаймасть.

А. Кибеч на международной научной конференции в Венгрии. 1986 год



АФГАН ЮРРИ

Кёвви Ю. Григорьевăн



ЭПЁ – РОЗА ЧЕЧЕКЁ

Кёвви **А. Никитинăн**



Эсĕ хăв патна чĕнсен,
Сăмах патăм тĕл пулма.
Анчах шухăшна пĕлсен,
Сивĕ çапрĕ чунăма.

Хушса юрламалли:

Туйăмсăрах чуп тумашкăн,
Шыв ĕçмелли курка мар эп.
Ална ирĕке ямашкăн,
Çул хĕрринчи чечек мар эп.
А-а-а ...

Мĕншĕн шухăтытрăн-ши
Манпала эсĕ хăвна?!
Мĕншĕн пит хĕрхентĕн-ши
Маншăн ырă кăмăлна?!

Хушса юрламалли.

Хушса юрламалли.

Эпĕ – роза чечекĕ,
Эпĕ – йĕплĕ чечек.
Чăн-чăн юратусăр
Эпĕ сан пулас çук.

Асра тыт эс ĕмĕрех:
Йĕпсĕр роза чечек çук.
Юратусăр пурпĕрех
Эпĕ санăн пулас çук.

Нимĕн шарламарĕç ăçта вĕçнине,
Пĕлĕтрен пăрахрĕç ют çĕршыв çине.
Юлташпа çӳрерĕм вут-хĕм сирпĕтсе,
Ирĕк парас терĕм Афган халăхне.

Хушса юрламалли:

Юлчĕ юнлă Афганистан,
Тен, ылханса, тен, макăрса.
Афганистан – суя тăшман,
Унта кайма анне хушман.
Афганистан – чыса сутни,
Яш-кĕрĕме суранлатни.

Çамрăклах эп куртăм вăрçă мĕнлине,
Сахал мар çухатрăм çывăх туссене.
Ют çĕрте çӳрерĕм паттăр шутĕнче,
Темшĕн пĕлеймерĕм мĕншĕн вăрçнине.

Хушса юрламалли.

Тархасшăн ан васкăр мана сивлеме:
Кайман унта эпĕ хам ирĕкпеле.
Тархасшăн ан калăр эп яман тесе,
Тархасшăн, тархасшăн, тархасшăн.

Хушса юрламалли.

ПИРĔН МĔНШĔН КУЛЯНАС?

Кĕвви Ю. Жуковăн



Кăнтăрла сив çил вĕрсессĕн,
Каçĕ сулхăнрах пулать.
Чĕрене сив тăм тивсессĕн,
Кăмăл тунсăха путать.

Пурри пуршăн кулянать,
Çукки çукшăн кулянать.
Пирĕн мĕншĕн кулянас, –
Хамăр пуршăн савăнас.

Темчул тăрăшса утсан та,
Пурнăç пурпĕр тикĕс мар.
Юратма тупа тусан та,
Чашăк-тирĕк сассăр мар.

Пурри пуршăн кулянать,
Çукки çукшăн кулянать,
Пирĕн мĕншĕн кулянас, –
Сывлăх пуршăн савăнас.

Йывăр пурнăç пусарсан та,
Усас марччĕ пуçсене,
Шăкăр-макăрĕ пулсан та,
Каçарасчĕ пĕр-пĕрне.

Пурри пуршăн кулянать,
Çукки çукшăн кулянать.
Пирĕн мĕншĕн кулянас, –
Шанчăк пуршăн савăнас.

Депутат Чебоксарского городского Совет А. Кибеч (1990-1994) среди коллег

А. Кибеч и активисты землячества «Канашсем»: С. Шамуков, Л. Борисова, В. Гурьев, Т. Павлова

ҪУМРА ТĂВАН ПУЛМАРĔ

Кĕвви **Ю. Жуковăн**



Инçе çула, ай, кĕскетсе,
Атте ялне эп çитрĕм.
Тăвансене курас тесе
Пичче килне эп кĕтĕм.
Ача чухне аппа мана
Чĕрçи çине лартатчĕ.
Кичем чухне пичче мана
Пуçран шăлса лăпкатчĕ.

Кавча кайсан манчĕç пулас,
Аппа çыру çырмарĕ.
Тăлăх турат пултăм пулас,
Пичче хыпар ямарĕ.
Ăру ятне, ай, çĕклеме
Турри телей памарĕ.
Йывăр чухне хута кĕме
Çумра тăван пулмарĕ.

Йăмăк начар, ай, теейсе
Пуçа усса ан ларăр.
Чĕнмесĕрех килчĕ тесе,
Мана ытла ан ятлăр.
Ăш çуннине чарас тесе
Юр пуçласа юрларăм.
Мана тăван, ай, теейсе
Хăвăр çумма лартсамăр.

А. Кибеч (первый справа) среди руководителей районных землячеств Чувашской Республики

БЛАГОДАРСТВЕННОЕ ПИСЬМО

Уважаемый Анатолий Ильич!

Администрация города Чебоксары выражает Вам искреннюю благодарность за многолетнюю плодотворную работу, активную общественно-политическую деятельность, большой вклад в развитие культурной отрасли столицы Чувашии.

Вы принимаете самое активное участие в общественной жизни города, являясь членом Президиума Чувашского национального конгресса, председателем Совета Старейшин Чувашского национального конгресса, председателем Совета руководителей землячеств районов республики.

Область приложения Ваших сил многогранна и у Вас достаточно профессионального мастерства и опыта для решения многих культурных и социально-экономических задач, стоящих перед столицей.

Примите искренние пожелания крепкого здоровья, дальнейших успехов в вашем творчестве, благополучия и всего самого доброго!

Глава администрации
г. Чебоксары Н. И. Емельянов

БЛАГОДАРСТВЕННОЕ ПИСЬМО

Уважаемый Анатолий Ильич!

Центральная избирательная комиссия Чувашской Республики выражает Вам признательность за весомый вклад в организацию земячества Комсинского района, сохранение народных традиций и национальной культуры.

Примите наши сердечные поздравления в день Вашего юбилея. Желаем Вам крепкого здоровья, счастья, благополучия, пусть Вам всегда сопутствуют везение и успех.

Председатель Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики А. М. Аппис



ВИЛЁМСЁР ҪЕҪПЁЛ

Сăвви те, кĕвви те **А. Кибечён**



Тахçан авалтан кĕтнĕ Çеçпĕл,
Эс çитрĕн пире ыр сунса.
Камсем сăвăçа вилнĕ теççĕ,
Калаççĕ çакна йăнăшса.
Эс килтĕн те шанчăк çуратрăн,
Çутатрăн пуласлăх çулне.
Хĕрӳ сăмахпа эс вăратрăн
Чăвашăн салхуллă чунне.

Хушса юрламалли:

Пĕр харăссăн, Улăп пек утăр,
Хастарлă чăваш ачисем.
Ялан харсăр Çеçпĕл пек пулăр,
Ан юлăр кун-çул уттинчен.

Паман сана канăç пĕртанлăх,
Вăл пулнă чи шаннă йыхрав.
Эс пирĕншĕн ĕмĕрлĕх чăнлăх,
Сассу та янравлă шăнкрав.
Вилмен эсĕ, Çеçпĕл, пурнатăн,
Чĕрӳ сан тапма чарăнман.
Хĕвел пек çиçсе эс тăратăн,
Ялавăн курнатăн ялан.

Хушса юрламалли.

ЕХРЕМ ХУҪА, ТАВ САНА



Пулнă пирĕн несĕлсем,
Улăп евĕр паттăрсем.
Тулăх пурнăç хуçисем–
Чăн чăваш ĕçченĕсем.
Тав сана, тав сана,
Ехрем хуça, тав сана.

Эсĕ лартнă керменсем
Илĕртеççĕ инçетрен,
Çавăнпа та чăвашсем
Тав тăваççĕ чĕререн.
Тав сана, тав сана,
Ехрем хуça, тав сана.

Эсĕ тунă ыр ĕçсем
Халь те халăх асĕнче.
Пуç таяççĕ чăвашсем
Хуça çурчĕ умĕнче.
Тав сана, тав сана,
Ехрем хуça, тав сана.



САВНĂ КАНАШ ЕН *
(Мухтав юрри)

Кĕвви А. Осиповăн

Хавхалануллă



*Сăввине Г. Шевкенпе çырнă.

ШУПАШКАР ÇУТИ



Шурăмпуç çути тӳпене ӳксен,
Тĕксĕм пĕлĕтсен чаршавне сирсен,
Васкаса утап савни сан патна,
Çепĕç туйăмпа кĕтсе ил мана.

Шупашкар çути тӳпене ӳксен,
Шавлă урамсем лăпланса çитсен,
Чунăм хăвалать санпа тĕл пулма,
Ытамра тытса куçăнтан пăхма.

Шупашкар çути тӳпене ӳксен,
Атăл шевлисем йăлкăшса илсен,
Пирĕн юрату çиçтĕр хытăрах,
Ĕмĕтленнĕ туй çиттĕр хăвăртрах.





Чăваш Ен варринчи Канаш Енĕм
Шурăмпуç çутипе вăрансан,
Пуç таять таврана ял ĕçченĕ
Çĕнĕ кун акине пуçăнса.

Юр юрлатпăр чунтан савăнса та,
Канаш Енĕм, сана ыр сунса,
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана ыр сунса!
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана ыр сунса!

Çăл куç пек тапакан çĕр сĕткенĕ
Вăй парать Çеçпĕл пек çĕкленме,
Ваттисен сăмахне итлекенĕ
Пил илет телейпе киленме.

Юр юрлатпăр чунтан савăнса та,
Канаш Енĕм, сана юратса,
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана юратса!
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана юратса!

Пĕрлĕхе упракан тус-тăванăм
Тав тăвать сана халь чĕререн,
Ĕмĕрех санра пирĕн хавалăм –
Тĕреклен кунсерен, Канаш Ен!

Юр юрлатпăр чунтан савăнса та,
Канаш Енĕм, сана мухтаса,
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана мухтаса!
Канаш Енĕм, Канаш Енĕм,
Сана мухтаса!

Кĕвви **Ю. Григорьевăн**

УЯР, УЯР



Сар хĕвел тĕнчене хĕм сапсан
Йăлкăшса çуралать çĕнĕ кун.
Çĕр çинчи илеме тĕл пулсан
Ырлăхпа савăнать кашни кун.

Сар хĕвел ăшшине сапнă чух
Йăлкăшса çуралать çĕнĕ кун.
Çĕр çинчи илеме тĕл пулсан
Ырлăхпа савăнать кашни чун.

Хушса юрламалли:

Уяр, уяр уялла,
Çумăр пулсан каялла.
Уярпала туслашса,
Уяр çула тухмалла.
Уяр, уяр уялла,
Çумăр пулсан ялалла.
Уярпала туслашса
Тулăх пурнăç тумалла.

Телей алă çупса тăнă чух
Юрлама, ташлама пит аван.
Пурнăç çулĕ чăнах такăр чух
Туссене тав тума эс ан ман.

Хушса юрламалли.

Хушса юрламалли.



ТĔРĔК ÇАМРĂКĔСЕН ЮРРИ

Кĕвви Ю. Григорьевăн



Тухăçран çĕнĕ кун çывхарсан,
Саламлатпăр ăна пуç тайса.
Тĕрĕксем, пĕр-пĕрне тĕл пулсан,
Ыталатпăр чунтан савăнса.

Несĕлсен тымарне пĕлнĕçем,
Чĕресем туртăнаççĕ савса.
Тĕрĕксем, пĕр тăван çамрăксем,
Халь юрлатпăр пĕрле кар тăрса.

Хушса юрламалли:
Харăс утар,
Маттур каччăсем,
Паттăр пулар.
Харăс утар,
Кашкăр ачисем,
Паттăр пулар,
Яшсем – хĕрсем.
Харăс утар,
Маттур каччăсем,
Паттăр пулар,
Яшсем – хĕрсем.

Çапла хушнă пире аттесем,
Ырлăх-сывлăх сунса, пил парса.
Тĕрĕксем, вĕри юнлă туссем,
Халь ташлатпăр пĕрле ăмăртса.

Хушса юрламалли.

Откровенный разговор с П. Козловым

АХ, ЮРАТУ

Кĕвви **Н. Заводсковăн**



Ёмётленсе кĕтнĕ ырă кун
Савăнăçпа эс кĕрле.
Пĕр-пĕрне шыранă икĕ чун
Тинех пулĕç халь пĕрле.

Хушса юрламалли:

Ах, юрату, иксĕлми сан хăвату,
Ма çунтаран чунăма,
Çиçтеретĕн сăнăма.
Ах, юрату, эсĕ манăн ырату,
Ма çунтаран чунăма,
Çиçтеретĕн сăнăма.

Ёмĕр пĕрле пулнă çын пекех
Халь тăрăшăп сан çумра.
Шанчăкăма тупрăм эп тинех
Санăн ăшă ытамра.

Хушса юрламалли.

Саншăн пулăп эпĕ сар хĕвел,
Эсĕ маншăн уйăх пул.
Илĕртсе вылятăр çут шевле,
Умра пултăр такăр çул.

Хушса юрламалли.

Рядом с сестрой Галиной

АМАЗОНКА



Çил çунатлă юланутçă
Сиксе тухрĕ май ума,
Ухăпа персе амантрĕ,
Суранлатрĕ чунăма,
Чĕртсе ячĕ туйăма.

Хушса юрламалли:
Капăр тумлă амазонка,
Мĕншĕн сана тĕл пултăм.
Ама çыннăм – амазонка,
Канлĕ канăça çухатрăм.

Тĕл пулнишĕн шикленетĕп,
Тыткăнри пекех туяп.
Анчах пурпĕр хĕпĕртетĕп,
Хăрасан та чуптăватăп,
Аманнишĕн савăнатăп.

Хушса юрламалли.

Хăварсамччĕ, хăварсамччĕ,
Мана эсĕ хăв çумра.
Юрату тарçи пуласчĕ,
Киленесчĕ ытамра,
Эпĕ халĕ сан алра.

Хушса юрламалли.

АТТЕСТАТ
ДОЦЕНТА
АЦ № 003237
Решением
Министерства высшего и среднего специального образования СССР
ПРИСВОЕНО УЧЕНОЕ ЗВАНИЕ
ДОЦЕНТА

Благодарная читательница



УДОСТОВЕРЕНИЕ ДЕПУТАТА № 14
Товарищ Ефимов
Анатолий
избран депутатом
городского Совета народных Депутатов
Чувашской АССР
Председатель Совета народных депутатов
Удостоверение действительно
по марта 1990 года
Личная подпись депутата

УМРА ПУРНĂÇ ÇИÇЕТ

Кĕвви **М. Луковăн**



Чечекленнĕ улăх
Илемпе çиçет.
Çӳлтен панă ырлăх
Кашнинех çитет.
Умра пурнăç кĕтет,
Пире те чĕнет,
Пире те чĕнет,
Тулли телей пиллет.

Юр юрлакан кайăк
Юрату кĕтет.
Юрласассăн лайăх,
Тен, кĕтсе илет.
Умра пурнăç кĕрлет,
Пире те чĕнет,
Пире те чĕнет,
Тулли телей пиллет.

Икĕ кăвакарчăн
Кĕлете кĕрет.
Иккĕн пулнă хыççăн
Виççĕн пулас тет.
Умра пурнăç вĕрет,
Пире те чĕнет,
Пире те чĕнет,
Тулли телей пиллет.

Дома

Çӳлтен панă ырлăх
Пурне те çитет.
Хамăр тунă пурлăх
Хамăра тивет.
Умра пурнăç çиçет,
Пире те чĕнет,
Пире те чĕнет,
Тулли телей пиллет.



ВАТĂЛМА ТА ВĂХĂТ ÇУК

Кĕвви **М. Луковăн**



Кам хăять-ха ватăлатпăр-çке теме,
Кам васкать-ха кун-çул вĕçĕ патнелле.
Пурнас марччĕ ватлăха кĕтсе ларса,
Пурăнасчĕ кашни куншăн савăнса.

Ватлăх ман пата пымашкăн шут тытсан
Асăрхатăр эпĕ ватă маррине.
Тĕрĕслетĕр вăйăм-халăм мĕнлине,
Шута илтĕр чунăм çамрăк пулнине.

Ман çумра халь ĕçпе юрă пĕрле чух,
Ватлăха аса илме те вăхăт çук.
Ман çумра халь пикесем йăл кулнă чух,
Кулянма та, ватăлма та вăхăт çук.

Перед читателями







МАНА ТЕМШĔН СИВĔ

Кĕвви **М. Луковăн**



А. Кибеч отвечает на вопросы читателей

Ешерет Чăваш çĕршывĕ,–
Терĕç юрăçсем пире.
Анчах тем чул юрласан та
Ешерни пит курăнмарĕ.
Ешерни пит курăнмарĕ,
Тĕнчери пек туйăнмарĕ.

Хушса юрламалли:
Сивĕ, сивĕ,
Темшĕн сивĕ.
Чунăм лăпкă мар.
Пулĕ-ши умра
Ăшă сывлăш хумĕ,
Пулĕ-ши умра
Ырă пурнăç çулĕ?

Тулăх пурнăçпа пурнатпăр, –
Терĕç сăвăçсем пире.
Анчах тем чул вуласан та
Тулăх пурнăç курăнмарĕ.
Тулăх пурнăç курăнмарĕ,
Тĕнчери шай сисĕнмерĕ.

Хушса юрламалли.

Ĕçлĕ халăх пит телейлĕ, –
Терĕç пуçлăхсем ăна.
Анчах тем чул тăрăшсан та
Телейне вăл тупаймарĕ.
Телейне вăл тупаймарĕ,
Тĕнчепе тан пулаймарĕ.

Хушса юрламалли.



ХĔЛЛЕХИ ЮРАТУ





Аслă çул çине эп тухрăм,
Тăтăм тĕттĕм пуличчен.
«Юратап» тесе те çыртăм,
Юр юрларăм сан çинчен.

Хушса юрламалли:
Эс, хĕллехи юрату,
Ан пул маншăн ырату.
Ăшăт тунсăх чĕреме,
Шăнса кӳтнĕ ӳтĕме.

Сивĕ чунлă хĕл мучийĕ
Хуçа пулчĕ таврара.
Шăлса кайрĕ çавра çилĕ
Эпĕ çырнă сăмаха.

Хушса юрламалли.

Ак каллех чĕрсе çыратăп
Хамшăн хаклă сăмаха.
Кил часрах, сана шанатăп,
Ан хăвар-ха тăлăха.

Хушса юрламалли.

ЮРАТУ ХĂВАЧĔ

Кĕвви О. Кăйкăрăн



Çук, пĕлмен, шутламан çакăн пек пуласса,
Савма маннă чуна эсĕ вăй парасса.
Мĕнле ырă шăпа тĕл пултарчĕ сана,
Мĕнле ырă самант телей пачĕ мана.

Çук, пĕлмен, шутламан çакăн пек пуласса,
Ман валли те çапла юрату тупнасса.
Паянтан пуçласа ĕмĕтсем урăхла,
Ма тесен, сан сăну яланах куçăмра.

Çук, пĕлмен, шутламан çакăн пек пуласса,
Туйăмсем кăвар пек йăлкăшса çунасса.
Чĕререн тав тăвап, савнă тусăм, сана,
Юрату хĕмĕпе эс çын турăн мана.

А. Кибеч в Чебоксарах посадил более ста деревьев. Его любимые деревья – ветла и сирень

САРМАНТЕЙЁН САР ЧĂХХИ

Кĕвви Г. Скворцовăн





Сармантейĕн сар чăххи те
Сар çăмарта тунă тет,
Çав çăмарта варринче те
Ман телейĕм выртнă тет.

Хушса юрламалли:
Ман телейĕм, ман телей,
Манран темшĕн пытанать.
Ман телейĕм, ман телей,
Эп шанатăп тупăнать.

Сар чăххине юратса
Сарă тулă панă тет,
Çăмартине пытарса
Тĕп сакайне хунă тет.

Хушса юрламалли.

Ылтăн евĕрлĕ парнийĕ
Лекеймен çав чăх айне,
Çавăнпа та ман телейĕм
Тупайман çав хăй çулне.

Хушса юрламалли.

ШУПАШКАР ЧЕБОКСАРЫ

Кӗвви Ф. Лукинăн / Музыка Ф. Лукина



Çунатна эс сартăн Атăл хĕрринче,
Савнă тĕп хуламăр, кашнин чĕринче.

Шупашкар, Шупашкар,
Мĕн тери эс капмар –
Юмахри пек хитре,
Ыр сунатăн пире.

Çĕнелсе çĕклентĕн халăх пилĕпе,
Яту инçе кайрĕ тĕнче шайĕпе.

Шупашкар, Шупашкар,
Мĕн тери эс патвар –
Сăлтав пур савăнма,
Кар тăрса юрлама.

Çирĕп пултăр утăм пирĕн санпала –
Ирĕк те мухтавлă, сумлă тĕп хула.

Шупашкар, Шупашкар,
Мĕн тери эс хастар.
Санра пирĕн вăй-хал,
Иксĕлми ăраскал.

Город наш любимый, чуден твой расцвет,
Ликом чебоксарским восхищен весь свет.

Шубашкар, Шубашкар –
Ты для нас дивный дар,
Всех чаруешь красой,
И своей добротой.

Чебоксары славны, величавей нет,
Ты как дом родимый в сердце с юных лет.

Шубашкар, Шубашкар –
Ты для нас светлый дар,
Лучезарной судьбой
Скреплены мы с тобой.

Древний город стольный устремлен вперед,
Мудрый, хлебосольный здесь живет народ.

Шубашкар, Шубашкар –
Ты для нас щедрый дар,
Под счастливой звездой
Вечно быть нам с тобой.

А. Кибеч и Л. Семенова исполняют песню «Ĕмĕр сакки сарлака»

Мисс Чувашии И. Семенова и А. Кибеч

Однокашники: А. Кибеч и известный фотохудожник С. Васильев

МУХТАВ ЮРРИ

Сăвви те, кĕвви те **А. Кибечĕн**



Чăваш тĕнчи, эс сарлака,
Туссем, эсир те аякра.
Мухтав юрри чĕнет пире
Пулмашкăн яланах пĕрле.

Атте-анне пехилĕпе,
Çĕрпе Хĕвел хăвачĕпе
Вăйлатар чăвашлăха,
Манар мар тăванлăха.

Чĕрем тапать халь хытăрах,
Чакма памасть хастарлăха.
Пуласлăх хамăр алăрах –
Янратăр юррăм уççăнрах.

Атте-анне пехилĕпе,
Çерпе Хĕвел хăвачĕпе
Вăйлатар чăвашлăха,
Манар мар тăванлăха.

А. Кибеч поздравляет Е. Жачеву с днем рождения



На презентации фотоальбома С. Васильева «Отчий дом»

ÇИТМӐЛ ИКӐ СЕХЕТ

Кӗвви **А. Никитинӑн**

Хура пӗлӗт карса илчӗ тухӑҫа,
Шиклӗ шухӑш пӑчӑртарӗ пуҫӑма,
Йывӑр сывлӑш пӳлсе лартрӗ кӑкӑра,
Мӗлкесем чупа пуҫларӗҫ ман умра.

Хушса юрламалли:
Çитмӗл икӗ сехет, çитмӗл икӗ сехет,
Пӑрлӑ çумӑр килет аякран.
Çитмӗл икӗ сехет, çитмӗл икӗ сехет,
Кар тӑмашкӑн чӗнет вӑл паян.
Çитмӗл икӗ сехет, çитмӗл икӗ сехет,
Сивӗ çил вӗҫтерет тӳпере.
Çитмӗл икӗ сехет, çитмӗл икӗ сехет,
Сыхлӑха вӗрентет вӑл пире.

Пуҫ çӗклерӗҫ ав, кӑтартрӗҫ хӑйсене,
Уҫса пачӗҫ умри ирсӗр тӗллевне.
Ура хучӗҫ ирӗк пурнӑҫ юхӑмне,
Чарас терӗҫ ман Çӗршывӑн утӑмне.

Хушса юрламалли.

Шӑпи тулчӗ икӗ питлӗ пуҫлӑхсен,
Ӗҫ тухмарӗ хура юнлӑ хурахсен.
Çук, пӗтмен-ха вӗри чунлӑ паттӑрсем,
Шанчӑк пур-ха, пурнӑҫланӗҫ ӗмӗтсем.

Хушса юрламалли.

Асӑрхаттару: çак юрра 1991 çулхи çурла уйӑхӗн 22-мӗш кунӗнче çырнӑ.

ИТАЛИРЕН КИЛНӖ ХӐНА ЮРРИ

Кӗвви **Н. Заводсковӑн**

Чун туртнипе кунта киленто,
Чӑваш енне çитсе куранто,
Чӑваш енне çитсе куранто,
Мӗн курнине куплет юрланто.

Мӗн Атӑла курса савнанто,
Музейсене кӗрсе туханто,
Чуна парса «Нарспи» куранто,
Шупашкарта нумай таланто.

Чӑваш ялне çитсе куранто,
Йӑла-йӗрке кунта пуянто,
Хапха уҫса кӗтсе иленто,
Кашни килте хӑна пуланто.

Кӗрекене кӗрсе ларанто,
Шӳрпе, шӑрттан çисе куранто,
Ватти-вӗтти хисеп тӑванто,
Патша пекех хама туянто.

Алькеш енне çитсе куранто,
Чӑваш тӗрри мӗнле пуянто,
Айдак патне кӗрсе туханто,
Чӑваш сӑри ӗҫсе куранто.

Акатуйне çитсе куранто,
Вӑй картине кӗрсе тӑранто,
Алран-алла тытса юрланто,
Чӑваш юрри янрать бельканто.

Хӑна пулса нумай çӳренто,
Анчах кӗтет тӑван Сорренто,
Эсир вара чипер юланто,
Йыхрав ярсан пырса куранто.

Стенд на улице Афанасьева Чебоксар, слова А. Кибеча

КУЛСА ТĂТĂР УЙĂХ

Кĕвви **В. Федоровăн**

Пушăпа çапасчĕ
Çутă хĕвеле.
Темшĕн вăрăм пулчĕ
Кунĕ ман тĕле.
Пурпĕр вĕçсе çитрĕм
Чĕннĕ вырăна,
Эсĕ те ав килтĕн
Шаннă йăвана.

Хушса юрламалли:
Иккĕн тĕл пулсан,
Эс ытакласан,
Кирлĕ мар мана
Чĕмсĕр юрату.
Илтĕр çунтарса
Сан пылак туту,
Тăтăр йăлкăшса
Пирĕн юрату.

Çăтмахри пек лайăх
Пултăрччĕ пире.
Кулса тăтăр уйăх
Çӳллĕ тӳпере.
Иккĕн ытамра чух
Теприн мĕн ĕç пур.
Юрату çумра чух
Юрату çеç пур.

Хушса юрламалли.

САВĂНСА ПУРНАС КИЛЕТ

Кĕвви **И. Андреевăн**

Маншăн халь кашни кун çуркунне
Ма тесен, эп тупрăм савнине.
Манас çук ун çепĕç сассине,
Сансăр пурнăç çуккă тенине.

Хушса юрламалли:
Юратас та килет,
Юратни пулас килет.
Юратупа çăвăнса,
Савăнса пурнас килет.

Маншăн халь кашни кун çуркунне
Ма тесен, кĕтетĕп савнине.
Чун сисет телейĕм пуррине,
Ик чĕре пĕрле пулмаллине.

Хушса юрламалли.

Маншăн халь кашни кун çуркунне,
Ма тесен, шанатăп савнине.
Эп туятăп вăл çывхарнине,
Венчете чĕнме васканине.

Хушса юрламалли.



А. Кибеч и заместитель главы города Чебоксары И. Клементьева на важном совещании

ВАТЛĂХРА ПĔРЛЕ ПУЛАСЧĔ

Кĕвви **Ю. Григорьевăн**

Ман пата салам ярасçĕ
Хам ӳстернĕ ачамсем,
Çепĕç кĕвĕ шăратасçĕ
Шупашкарти юрăçсем.
Кантăкран çил шаккасан та
Чĕрем хускалса илет.
Эсир киле килмесен те
Чупса тухассăм килет.

Хĕвелпех танлаштарасçĕ
Юрăсенче амăшне.
Анчах темшĕн васкамасçĕ
Çул тытмашкăн кил енне.
Хапхаран çил шаккасан та
Чĕрем хускалса илет.
Эсир киле килмесен те
Чупса тухассăм килет.

Пурăнса кăштах курасчĕ
Сирĕнпе пĕр çемьере.
Ватлăхра пĕрле пуласчĕ,
Кăшт тăсасчĕ ĕмĕре.
Урамри çынна курсан та
Чĕрем хускалса илет.
Эсир киле килмесен те
Чупса тухассăм килет.

Хушса юрламалли:
Тунсăх шухăш, тунсăх шухăш,
Хăй ытамĕнчен ямасть.
Тунсăх тĕлĕк, тунсăх тĕлĕк,
Канлĕ çывăрма памасть.

Хушса юрламалли.

Хушса юрламалли.

ЮРАТУСĂР ТЕЛЕЙ ÇУК

Кĕвви **Ю. Кудаковăн**

Чăн юрату мĕнлине
Пур-ши лайăх пĕлекен,
Халсăр чĕрем кăварне
Кăшт та пулин чĕртекен.
Çумра çывăх çын çукки
Кашни кунах сисĕнет.
Юратусăр пĕрлешни
Савăнăç çулне пӳлет.

Хама пĕччен туйнипе
Ăш пуçларĕ вăркама.
Юратнă çын çуккипе
Сулхăн çапрĕ чунăма.
Юратупа çăвăнса
Çуралтăрччĕ кашни çын.
Юратупа ăшăнса
Пурăнтăрччĕ кашни кун.

Юратусăр пĕрлешсе
Улталар мар пĕр-пĕрне,
Юратусăр пурăнса
Кĕскетер мар ĕмĕре.
Юратусăр телей çук,
Унсăр тунсăх пурăнма.
Турă çырни çумра чух
Ан пăрахăр юратма.



МĂШĂР ТЕНИ МĔН ТЕНИ

Кĕвви **Г. Алексеевăн**

Мăшăр тени мĕн тени,–
Çумра арçын пур тени.
Юратупа пĕрлешсе
Пĕр çăмхана явăнни,
Пĕрне-пĕри итлесе
Килĕштерсе пурăнни.

Мăшăр тени мĕн тени, –
Çумра хӳтлĕх пур тени.
Ĕшенсессĕн тайăнма
Юман вырăнне пулни,
Ăшшăн тытнă ытамра
Ачашланма май пурри.

Мăшăр тени мĕн тени, –
Çумра шанчăк пур тени.
Çирĕп сывлăхлă пулса
Ăрăва вăй-хал пани,
Çут пуласлăха курса
Хавасланса пурăнни.

Мăшăр тени мĕн тени, –
Çумра ырлăх пур тени.
Ватлăхра та киленсе
Пурнăçа хыт юратни,
Ачасене ӳстерсе
Пĕрле ĕмĕр вĕçлени.

КĔСМЕНСĔР КИМĔ

Кĕвви **О. Семеновăн**

Эп хамшăн хăрамастăп,
Эп курнă пурăнса.
Ачам çинчен шутлатăп
Шăпишĕн хăраса.

Хушса юрламалли:
Кĕсменсĕр кимĕ евĕр
Ишетĕп пурнăçра.
Ăçта илсе çитерĕ
Çак ахăр самана.

Пире хĕссе çитерчĕ
Еткерлĕх чухăнни.
Мĕскер ăна пĕтерчĕ,
Ăçта эп вăй хуни?

Хушса юрламалли.

Ытла вылять-çке шанăç,
Таканари шыв пек.
Ăçта эс, чунри канăç,
Ăçта ăшри тӳлек?

Хушса юрламалли.

Шăвать халь пурнăç тирĕс,
Ун пур-ши тилхепи?
Мĕн-ма-ши кăштах тикĕс
Кусмасть ун урапи?

Хушса юрламалли.

ШУРĂМПУҪ ТАШЛАСА ҪЫВХАРСАН

Кĕвви **М. Луковăн**

Шурăмпуҫ ташласа çывхарсан
Умри çул курăнать уççăнрах,
Умри çул уççăнрах курăнсан
Пурнăҫ лавĕ чăнах çăмăлрах.

Хушса юрламалли:
Тулăх пурнăҫ патне çывхарма
Пĕр-пĕрне пулăшни пит аван.
Туйăма палăртса юрлама
Тăвансем кар! тăрсан пит аван.

Ĕмĕре тивĕçпе ирттерме
Хăв чысна упрама пĕлмелле.
Пĕрчĕн пухнă мулпа киленме
Ĕçпеле пиçĕхсе ӳсмелле.

Хушса юрламалли.

Шурăмпуҫ ташласа çывхарсан
Мĕнпур кайăк пуҫлать юрлама.
Кашни çын ырлăхпа туслашсан
Сăлтав пур пурнăҫпа савăнма.

Хушса юрламалли.

ҮКĔНҮ

Кĕвви **Ю. Григорьевăн**

Пурнăҫ çулĕ çине эп, ай, пăхрăм,
Хам йĕре палласа илеймерĕм.
Тăвас тенĕ ĕçе тăваймарăм,
Çитес тенĕ çĕре çитеймерĕм.

Çĕр-анне сĕткенне сыхлаймарăм,
Атăла пӳлнĕ чух чараймарĕм,
Таса сывлăш вăйне упраймарăм,
Тулăх пурнăҫ тума пĕлеймерĕм.

Çут пуласлăх пирки кăшкăрашрăм,
Тăван халăх чапне çĕклеймерĕм.
Ачампа кар тăрса юрлаймарĕм,
Чĕлхеме те ăна пиллеймерĕм.
Тăвас тенĕ ĕçе тăваймарăм,
Çитес тенĕ ĕçре çитеймерĕм.

Айăплăн туятăп сирĕн умăрта,
Каçару ыйтатăп çамрăк тусăмран.
Айăпăм ман пысăк сирĕн умăрта,
Каçару ыйтатăп çамрăк ăруран.
Айăплăн туятăп сирĕн умăрта,
Каçару ыйтатăп çамрăк ăруран.

Глава Канашского района И. Иванов и глава администрации района В Софронов поздравляют А. Кибеча с присвоением звания «Почетный гражданин Канашского района». 2011 год

КĂВАР ÇИНЧИ ТАШĂ

Выртать кăвар йăл-йăл çиççе,
Пире парса хăй ăшшине.
Вут пек таса пулас тесе
Чăваш хывать те аттине,
Кĕрсе каять кăвар çине,–
Çапла пуçлать хăй ташшине.
Çарран сикет кăвар çинче,–
Çапла сыхлать хăй сывлăхне.

Кĕрсе каять кăвар çине,
Вăл хăйшĕн хŭтлĕх шыраса.
Çарран сикет кăвар çинче
Те савăнса, те макăрса.
Ташлать чăваш кăвар çинче,
Çапла упрать чун хавалне.
Сикет чăваш кăвар çинче,–
Çапла сыхлать ятне-сумне.

Çарран сикет кăвар çинче
Ниçта кайса кĕме çукран.
Ташланă чух кăвар çинче
Хăрушă мар нимле тăшман.
Ташлать чăваш кăвар çинче,
Çапла упрать хастарлăхне.
Сикет чăваш кăвар çинче,–
Çапла сыхлать хăй ирĕкне.
Чăваш ташлать кăвар çинче...

Всероссийский Азербайджанский Конгресс

Umumrusiya Azərbaycan Konqresi

№ _____ «17» декабря 2006 г.

Президенту компании "Химпласт"
Кибеч Анатолию Ильичу

Уважаемый Анатолий Ильич!

Всероссийский Азербайджанский Конгресс сердечно поздравляет Вас с замечательным праздником – праздником творчества «Химпласт».

Край давнего расселения и самое сердце прекрасной Чувашской Республики. Являясь крупнейшим экспортоориентированным узлом не только Чувашии, но и всей России, он способствует объединению народов, проживающих в России и на всем пространстве бывшего Советского Союза.

Выражаем Вам огромную признательность за активное участие в деле сохранения и дальнейшего развития традиций чувашского народа. Благодаря Вам и Вашим усилиям дружбы между народами, развитию межнациональных отношений.

Дружба азербайджанского народа с народами России, в том числе с чувашским народом, крепнется с каждым годом. Сегодня многие граждане азербайджанской в России региональной отделения принимают активное участие в развитии экономики Чувашской Республики. Мы, азербайджанцы, выражаем Вам самую признательность за поддержку, предоставить в нашей республике нашу историческую Родину, великую азербайджанскую нацию.

Желаем доброго здоровья, дальнейших успехов и неиссякаемой энергии, счастья и благополучия, процветания, мира и согласия.

С уважением Президент Всероссийского Азербайджанского Конгресса, академик Российской Академии наук Алиев М.Д.

ТОВАРИЩ
Ефимов
Анатолий Ильич

ПРЕЗИДИУМ ВЕРХОВНОГО СОВЕТА
ЧУВАШСКОЙ АССР
УКАЗОМ ОТ 30 декабря 1992 ГОДА
ПРИСВОИЛ ВАМ ПОЧЕТНОЕ ЗВАНИЕ
ЗАСЛУЖЕННОГО РАБОТНИКА
КУЛЬТУРЫ
ЧУВАШСКОЙ АССР
За заслуги в развитии самодеятельного художественного творчества

Анатолий Ильич
Ефимов
КУЛТАШ

ЧĂВАШ АССР
ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ
1992-МĔШ СУЛХИ декабрĕн 30-МĔШĔНЧЕ
ЙĔКЛАРНĂ УКАЗПА СИРЕ
художество пултарулăх творчествăпа аталанăвăшăн тавăшлă ĕçсем тунăшăн

ЧĂВАШ АССР
КУЛЬТУРĂН
ТАВА ТИВĔÇЛĔ РАБОТНИКĔН
ХИСЕПЛĔ ЯТНЕ ПАЧĔ

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателĕ
Председатель Президиума Верховного Совета Чувашской АССР

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Секретарĕ
Секретарь Президиума Верховного Совета Чувашской АССР

ХИСЕП ГРАМОТИ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
ПРЕЗИДЕНЧĔН УКАЗĔПЕ

Анатолий Ильич
КИБЕЧЕ

ĕçре тунă ситĕнтерешлĕн тата
пуплай сăл турĕ кăмăлла ĕçленĕшĕн

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
ХИСЕП ГРАМОТИПЕ ЧЫСЛАНĂ

Чăваш Республикин Президенчĕ
Ĕлĕк куллăнăнăн указĕпе Л. Аблаевăн Указĕ

Указ Президента Чувашской Республики
от 3 марта 2012 года

ПОЧЕТНАЯ ГРАМОТА

УКАЗОМ ПРЕЗИДЕНТА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

КИБЕЧ
Анатолий Ильич

за успехи, достигнутые в работе,
и многолетний добросовестный труд

НАГРАЖДЕН ПОЧЕТНОЙ ГРАМОТОЙ
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Чăваш Республикин Президенчĕ
Президент Чувашской Республики

ПОЧЕТНАЯ ГРАМОТА

За активное участие в разработке проектов законов Чувашской Республики "О языках в Чувашской Республике", "О культуре", проекта Государственного гимна Чувашской Республики, большой вклад в развитие чувашской культуры и языка

ПОСТАНОВЛЕНИЕМ ПРЕЗИДИУМА
ГОСУДАРСТВЕННОГО СОВЕТА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ЕФИМОВ (Кибеч)
Анатолий Ильич

Награжден Почетной грамотой
Государственного Совета
Чувашской Республики

В.ШУРЧАНОВ

Дом, построенный А. Кибечем за лето 2011 года

150.8

Тупмалли:

Анатолий Ильич КИБЕЧ 2
ШУРĂ ШУПАШКАР / СВЕТЛЫЙ ГОРОД ЧЕБОКСАРЫ 3
ЁМЁР САККИ САРЛАКА 4
ÇАМРĂКЛĂХ СĂНАРЁ 5
ХАМĂР КИЛ ĂШШИ 6
КЁТСЕ ИЛ МАНА 7
ПУРНĂÇ ÇУЛЁ ТАКĂР МАР 8
УЛĂП ЕВЁР ÇЁКЛЕНЕР 9
ТĂВАН ЯЛĂМ 10
КĂВАК КĂВАКАРЧĂН 11
ТЕЛЕЙ, ТЕЛЕЙ 12
ТĂВАН ХУЛАМĂР 13
ЮРАТУ ВАЛЬСЁ 14
ВЁÇСЕ КИЛЧЁ ШĂНКĂРЧ ÇУРКУННЕ 15
МАН ЮРАТУ 16
ТУНСĂХ ЮРĂ 17
КУРИЧЧЕН КУРАС КИЛЕТ 18
ЧЕЧНЯРИ ЧĂВАШ КАЧЧИ 19
ЧЁРЕМ, ЧЁРЕМ 20
ПИРЁН ПУРНĂÇ ПЫЛ ТА ÇУ 21
МАН ÇĂЛТĂРĂМ 22
АЧА ÇУРТЁНЧЕ 23
АФГАН ЮРРИ 24
ЭПЁ – РОЗА ЧЕЧЕКЁ 25
ПИРЁН МЁНШЁН КУЛЯНАС? 26
ÇУМРА ТĂВАН ПУЛМАРЁ 27
ВИЛЁМСЁР ÇЕÇПЁЛ 28
ЕХРЕМ ХУÇА, ТАВ САНА 29
САВНĂ КАНАШ ЕН 30
ШУПАШКАР ÇУТИ 31
УЯР, УЯР 32
ТЁРЁК ÇАМРĂКЁСЕН ЮРРИ 33
АХ, ЮРАТУ 34
АМАЗОНКА 35
УМРА ПУРНĂÇ ÇИÇЕТ 36
ВАТĂЛМА ТА ВĂХĂТ ÇУК 37
МАНА ТЕМШЁН СИВЁ 38
ХЁЛЛЕХИ ЮРАТУ 39
ЮРАТУ ХĂВАЧЁ 40
САРМАНТЕЙЁН САР ЧĂХХИ 41
ШУПАШКАР / ЧЕБОКСАРЫ 42
МУХТАВ ЮРРИ 44
ÇИТМЁЛ ИКЁ СЕХЕТ 45
ИТАЛИРЕН КИЛНЁ ХĂНА ЮРРИ 45
КУЛСА ТĂТĂР УЙĂХ 46
САВĂНСА ПУРНАС КИЛЕТ 46
ВАТЛĂХРА ПЁРЛЕ ПУЛАСЧЁ 46
ЮРАТУСĂР ТЕЛЕЙ ÇУК 47
МĂШĂР ТЕНИ МЁН ТЕНИ 47
КЁСМЕНСЁР КИМЁ 47
ШУРĂМПУÇ ТАШЛАСА ÇЫВХАРСАН 48
ЎКЁНЎ 48
КĂВАР ÇИНЧИ ТАШĂ 49

«Анатолий Кибеч. Этапы творческого пути»

Отпечатано в ООО «Полиграфъ»

В выпуске использованы фотоматериалы из личного архива Анатолия Кибеча

Макет, вёрстка: Ульяна Пчёлкина

Тираж 500 экз.